Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнченпе тухать

78 (7932) № ✻ Шăмат кун, 2011 çулхи октябрь (юпа) уйăхĕн 8-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Тухăçлă вăй хучĕ

Эсир сăн ӳкерчĕкре Болеслав Николаевич Никитин комбайнера «Вырма-2011» конкурсра эрнери ăмăртура палăрнăшăн АПК ĕçченĕсен профсоюз райкомĕн ертӳçи Ф. Григорьева чысланине куратăр. Механизатор пĕрремĕш çул мар вырмана «хир карапĕн» штурвалĕ умĕнче ирттерет. Техникăна юратаканскер çулленех ĕçре пысăк ăсталăх кăтартать. Ĕç пĕтĕмлетĕвĕпе те Болеслав Николаевич çулленех ыттисемшĕн ырă тĕслĕх пулса тăрать. Чкалов яч. хис. ял хуçалăх производство кооперативĕ нумаях пулмасть туяннă «Вектор-410» комбайнпа мал туртăмлă механизатор кăçал та 2000 тоннăна яхăн çĕнĕ тырă вырса илме мехел çитерчĕ. Çавăнпа та ыран Раççейри ял хуçалăхĕпе продукци тирпейлекен промышленноçра вăй хуракансен професси уявне Б. Никитин таса кăмăлпа уявлама пултарать. Тунă ӳсĕмсемшĕн эпир те ăна саламлатпăр.

А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.

Еç çи паттăрĕсем

Ыран – Ял хуçалăхĕнче тата продукци тирпейлекен промышленноçра ĕçлекенсен кунĕ

Çĕр ĕçченĕ пĕччен мар

Муркаш районĕ ял хуçалăх ĕçĕпе тӳррамĕнех çыхăннă. Çавна май çак отрасль пирки тăтăш калаçни, тĕрлĕ ыйтăва хускатни вырăнлă та. Çĕр ĕçĕ вăл нихăçан та çăмăллисен шутĕнче пулман, патшалăхăн хушма пулăшăвĕсĕр хуçалăх малалла каясси вара иккĕленӳллĕ. Пĕрлĕхре – вăй текен каларăш кунта чăна килни яр уççăн палăрать.

Эпĕ ял хуçалăх отраслĕ районта тата уйрăм хуçалăхра еплерех аталаннипе паллашма Муркаш район пуçлăхĕпе, депутатсен районти Пухăвĕн председателĕпе, Ильич ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕн ертӳçипе И.В. Николаевпа калаçу ирттертĕм, хăш-пĕр ыйтăва уçăмлатма ыйтрăм.

– Игорь Васильевич, халăхи тапхăрта районти ял хуçалăх отраслĕ мĕнлерех аталанать, çĕр ĕçченĕ хăйне пĕчченлĕхре туймасть-и?

– Çĕр ĕçченĕ паянхи тапхăрта пĕчченлĕхре мар. Пирĕн Президент Михаил Васильевич хăй пурнăçне çĕр ĕçĕпе тачă çыхăнтарнăран, Раççей шайĕнчи ответлă ĕçченсем те ял хуçалăх лару-тăрăвне аван туйнăран эпир халĕ курăмлă пулăшу туятпăр.

Çапла вара иртнĕ çул района патшалăхăн тĕрлĕ бюджечĕсенчен пĕтĕмпе 140 миллион та 788 пин тенкĕ укçа уйăрнă. Вăл шутран федераллă бюджетран 56 миллион та 707 пин тенкĕ, республика бюджетĕнчен 84 миллион та 81 пин тенкĕ. Вăл шутран агропромышленноç комплексне пулăшма тата аталантарма – 126 миллион та 152 пин тенкĕ.

Паха вăрлăхран кăна пысăк тухăç илме пулать. Çавна май районти хуçалăхсем кирлĕ чухлĕ элиталлă вăрлăх туянма пултарччăр тесе патшалăх 15 миллион та 282 пин тенкĕ уйăрнă. Çанталăк тĕрĕслевне кура ял хуçалăх культурисене страхлани те питĕ вырăнлă, çак тĕллевпе районта 11 миллион та 712 пин тенкĕ укçа куçарса панă. Ял хуçалăх культурисем тĕлĕшпе тĕрлĕ мелиораци ĕçне пурнăçлама 10 миллион та 174 пин тенкĕ уйăрнă.

Иртнĕ çулхи çанталăк уйрăмах çĕр ĕçченĕшĕн йывăр пулчĕ, çапах та Раççей тата Чăваш Ен Правительствисем шайĕнче вăхăтра тĕллевлĕ хушма пулăшу уйăрнипе саланса каймарăмăр, выльăх йышне упраса хăварма пултартăмăр – ку вăл патшалăх пирĕн ума лартнă тĕп задача. Типĕ çанталăка пула пĕтнĕ культурăсемшĕн саплаштарма 30 миллион та 026 пин тенкĕ района килчĕ. Çанталăк условийĕсене кура выльăх апачĕ çителĕклĕ янтăлама май килмерĕ, ытти регионтан турттарма тиврĕ, ăна валли 23 миллион та 895 пин тенкĕ пулăшу укçи уйăрчĕç.

Çав йывăрлăха кăçал та лекес мар тесе Михаил Васильевич мĕн шăтнине, ӳснине йăлтах пуçтарса тирпейлеме, кирлĕ чухлĕ кăна мар, саппаслăх та янтăлаймă чĕнсе каларĕ. Çакна эпир пурнăçларăмăр.

Çакăнта патшалăх пурнăçланă халиччен пулман тепĕр ырă утăма та палăртса хăварас килет. Енчен те патшалăх субсиди уйăрман пулсан, иртнĕ çул хушма хуçалăх тытаканнисемшĕн те выльăх-чĕрлĕхе ăнăçлă хĕл каçарасси тата вĕсен йышне упрасси ытла та йывăра килетчĕ. Çапла вара ял çыннисем те пулăшăва туйрĕç.

Выльăх-чĕрлĕх усрани «чĕрĕ» укçа тума май парать, кунта вара ăратлăх çине пысăк тимлĕх уйăрма тивет. Унсăрăн хамăр куллен пурнăçлакан ĕç харама кăна каять. Выльăх-чĕрлĕх ăратне тытса тăма района 6 миллион та 961 пин тенкĕ, ăратлă вăкăр вăрлăхĕ туянма 298 пин тенкĕ, ăратлă çамрăк выльăх туянма 828 пин тенкĕ укçа уйăрнă. Сĕт туса илессине чакарман, ĕне йышне сыхласа хăварнă хуçалăхсем валли 6 миллион та 283 пин тенкĕ укçа куçарнă.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.)

Кĕскен

Çĕр улми пуссисенче

Çĕр ĕçченĕн паянхи тĕп задачи – «иккĕмĕш çăкăра» кăларса пухасси. Ĕнерхи куна ăна районĕпе 574 гектар (44,7 процент) çинчен пуçтарса илнĕ. Юлнă лаптăк – 711 гектар. Пысăк лаптăксем «Свобода» (105 гектар), «Ударник» (100 гектар) хуçалăхсенче, «ВаСем» (85 гектар) обществăра.

Райадминистраци хушăвĕ

Транспорта çӳреме чарнă

Муркаш район администрацийĕн октябрĕн 5-мĕшĕнчи 507 № хушăвĕпе «Волга» – Вурмой» çул çинче транспорта вăхăтлăх çӳреме чарнă. Çакă çул çинчи юсав ĕçĕсемпе çыхăннă. Çапла вара октябрĕн 6–11-мĕшĕсенче асăннă çулăн 3+230 çухрăмран пуçласа 5+050 çухрăм çул татăкĕ çинче 8 сехетрен пуçласа 18 сехетчен транспортăн çӳреме юрамасть – ятарласа палăртнă схемăна пăхăнмалла.

Хамăр инф.

Республикăра

Çамрăк çемьесене пулăшаççĕ

Тунти кун ЧР Президенчĕ Михаил Игнатьев «Пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатас енĕпе пулăшмалли хушма мерăсем çинчен» Указа алă пуснă. Халĕ кашни çамрăк çемьен, вĕсем экономикăн тĕрлĕ отраслĕнче тата бюджет сферинче ĕçлеççĕ пулсан, хăйĕн çуртне тума тата хваттер туянма пулать.

Çамрăк çемьесем Раççей Перекет банкĕн кредичĕпе (çулталăкне 5,5–7 процент тӳлемелле) усă курма пултараççĕ. Кăçалхи пуш уйăхĕнче ЧР Президенчĕ Михаил Игнатьев тата «Раççей Перекет Банкĕ» АУО Президенчĕ Герман Греф Килĕшĕве алă пусса çирĕплетнипе çапла тума май килнĕ.

Указпа килĕшӳллĕн çамрăк çемьесем ипотека кредитне çурт-йĕр туянма е тума ярсан кредит килĕшĕвне тунă кунран пуçласа 10 çул таранччен тăкаксен пĕр пайне республика бюджетĕнчен саплаштарма (çулталăкне – 4 процент) палăртса хăварнă.

Указа пурнăçласа çитес 3 çулта 6500 мăшăр пурăнмалли çурт-йĕр ыйтăвне татса пама пултарать.

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН АГРОПРОМЫШЛЕННОÇ КОМПЛЕКСĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ ТАТА ВЕТЕРАНĔСЕМ!

Сире Ял хуçалăхпе продукци тирпейлекен промышленноç ĕçченĕсен кунĕ ячĕпе саламлатăп!

Çак уяв тăван çĕре юратакан мĕн пур çынна пĕр тĕвве пĕрлештерет. Ял ĕçченĕсен професси ăсталăхĕ, суйласа илнĕ ĕçе чунтан парăнни, хастарлăхпа ĕçченлĕх пысăк кăтартусем тума тата палăртнă тĕллевсене пурнăçлама май параççĕ.

Сирĕн ĕçĕр çăмăл мар, анчах яланах хисепре. Эсир пире лайăх пахалăхлă ял хуçалăх таварĕсемпе тата апат-çимĕçпе тивĕçтерсе тăратăр, шăпах сирĕн канăççăр та ырми-канми ĕçĕре пула пирĕн сĕтел çинче яланах çемçе те техĕмлĕ çăкăр хуçаланать. Çăкăртан асли çук, ял хуçалăхĕ вара – экономика никĕсĕ.

Чăваш Енри çĕр ĕçченĕсен мухтанмалли пурах. Ял хуçалăх таварĕсен производстви ӳсет, çĕнĕ техникăпа оборудовани туянасси лайăх шайра пурнăçланать, мăйракаллă шултра выльăх тата кайăк-кĕшĕк шучĕ йышланать, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен комплекссем çĕкленеççĕ тата юсанса çĕнелеççĕ. АПК экономикине модернизацилес ĕç кал-кал аталанать, ял хуçалăхĕнче тата тирпейлекен промышленноçра инновацисем ĕçе кĕреççĕ. Çак пĕтĕм çитĕнĕве эсир тăрăшса тата тухăçлă ĕçленĕрен тума май килнĕ.

Республика Правительстви ялти пурнăç пахалăхне лайăхлатас енĕпе нумай тăрăшать. Специалистсемпе çамрăк çемьесем пурăнмалли çурт-йĕр çавăрма тата хăйсен бизнесне йĕркелеме субсидисем илеççĕ. Кăçал кăна Чăваш Енри çĕр ĕçченĕсене мĕн пур укçа-тенкĕ çăл куçĕнчен 1,5 миллиард тенке яхăн каялла тавăрса памалла мар субсидисем уйăрса панă тата патшалăх хутшăннине пула 4,2 миллиард тенкĕ ытла çăмăллăхлă кредитсем явăçтарнă. Çакă ял хуçалăх производствине ӳстерме тата хресчен ĕçĕн культурине улăштарма пулăшать.

Вăхăт çĕнĕ тĕллевсем лартать. Республикăн кал-кал аталанăвĕ тата çĕр-шывăн апат-çимĕç хăрушсăрлăхĕ тӳрремĕнех сирĕнпе пирĕн тăрăшулăхран килет. Шанатăп: сирĕн ĕçченлĕхĕре тата яваплăха пула эпир палăртнă тĕллевсене пурнăçлатпăрах. Çирĕп сывлăх, çĕнĕ çитĕнӳсем тата ыррине кăна сунатăп!

Чăваш Республикин Президенчĕ М. ИГНАТЬЕВ.

ХИСЕПЛĔ ЯЛ ĔÇЧЕНĔСЕМ! ÇАК ПАРХАТАРЛĂ ĔÇĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ!

Сире пурне те Ял хуçалăхпе продукци тирпейлекен промышленноçра ĕçлекенсен кунĕ ячĕпе ăшшăн саламлатăп.

Çăмăл мар, анчах пархатарлă ĕç тăватăр эсир. Тин çеç пиçсе тухнă ăшă çăкăр, сĕтел çинчи сĕт-турăх, пахча çимĕç – пирĕн сĕтел тулăх пулни йăлтах çĕр ĕçĕ мĕн тери хисеплĕ професси пулни çинчен калаççĕ. Эсир яланах çĕр пирĕн пуянлăх, пире тăрантараканĕ, пирĕн пурнăç никĕсĕ пулнине асра тытса ĕçлетĕр. Кăçал та тухăçлă тыр-пул çитĕнтерсе илтĕр, выльăх апатне те çителĕклĕ хатĕрлесе хăвартăр. Халĕ акă çанталăкăн кашни саманчĕпе усă курса çĕр улмие кăларса илессишĕн, пахча çимĕçпе тымар çимĕçе пухса кĕртессишĕн тимлетĕр.

Выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче вăй хуракансем те район аталанăвĕшĕн ырми-канми вăй хураççĕ. Аш, сĕт, çăмарта ытларах туса илессишĕн хăйсенчен килнине йăлт тăваççĕ. Фермăсенче халĕ хĕллехи тапхăр пуçланчĕ.

Районти хресчен (фермер) хуçалăхĕсене, килти хушма хуçалăх тытакансене те тав сăмахĕ калас килет. Район аталанăвĕнче вĕсен тӳпи те çителĕклех.

Çавăн пекех шкулсенче вĕренекенсене те ырăпа асăнса хăварас килет. Çуллахи вăхăтра ял хуçалăх культурисене çум курăкран тасатма пулăшаççĕ, вырмара йĕтемсем çинче вăй хураççĕ. Кĕркунне ял хуçалăх предприятийĕсене çĕр улми пухса кĕртме пулăшаççĕ.

Тавах сире, ял ĕçченĕсем, пархатарлă ĕçĕршĕн, чăтăмлăхăршăн, тăрăшулăхăршăн.

Умра – Пукрав, хĕл кунĕсем çывхарса килеççĕ. Çакă пирĕн яваплăха татах та ӳстерме ыйтать. Выльăх-чĕрлĕх йышне сыхласа хăварассипе, вĕсене ăнăçлă хĕл каçарассипе, продукци туса илессине ӳстерессипе тимлемелле. Çитес çул валли пахалăхлă вăрлăх хатĕрлесе хăвармалла. Пур ĕçе те эсир вăхăтра тата пахалăхлă тăвасса шанатăп.

Пурне те сире çирĕп сывлăх, телейлĕ те вăрăм кун-çул сунатăп. Тăрăшса ĕçлес кăмăл тапса тăтăр сирĕнте. Сĕтел çи яланах тулăх пултăр. Çемйĕрсенче яланах килĕшӳпе юрату хуçаланччăр.

Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю. ИВАНОВ.

Саламлатпăр

Чи хаклă, юратнă аннене – Мăн Тутаркас ялĕнче пурăнакан **Зоя Михайловна ОТЕНОВĂНА** 55 çулхи юбилей ячĕпе чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Эпир сана питĕ хытă юрататпăр, эсĕ пирĕн çумра пулсан савăнатпăр, хамăра телейлĕ туятпăр. Ырлăх-сывлăх, телейлĕ кун-çул сунатпăр. Тулли пурнăçпа пурăнмалла пултăр. Турри яланах пулăшса пытăр.

Саламмпа: хĕрĕсем, кĕрӳшĕ, мăнукĕ Ева, тăванĕсем.

Юнкă ялĕнче пурăнакан, 44 çул учительницăра ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă **Зоя Андреевна ТЕПЕЕВĂНА** çак кунсенче 85 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн, ăшшăн саламлатпăр. Вăрăм ĕмĕр, çирĕп сывлăх, телей сунатпăр.

Саламлаканĕсем: хĕрĕсем, кĕрӳшĕсем, кинĕсем, пилĕк мăнукĕ, Артем, Настя, Максим, Никита кĕçĕн мăнукĕсем, Маряшкинсем, Тойгильдинсем, кӳршисем.

Юратнă мăшăр, аннене, хĕрĕме, аппана, кума хĕрне – Ятман ялĕнче пурăнакан **Надежда Геннадьевна НИКИТИНĂНА** çуралнă кунĕ ячĕпе саламлатпăр. Яланах хавас кăмăл-туйăмлă, çирĕп сывлăхлă пул, телей, ăнăçу сунатпăр, ĕмĕтӳсем çитсе пыччăр. Эпир сана юрататпăр, хисеплетпĕр.

Саламмпа: мăшăрĕ, икĕ хĕрĕпе ывăлĕ, амăшĕ, Лиди аппăшĕ, Егоровсен, Захаровсен, Волковсен, Максимовсен, Петровсен, Калашниковсен, Ивановсен çемйисем, ĕçри юлташĕсем.

Кăçалхи 9 уйăх итогĕсем

Сăмах – ӳсĕмлĕ ĕçлекен предприяти ертӳçисене

В.А. БАКШАЕВ, «Сеспель» хупă акционер обществин генеральнăй директорĕ:

– Иртнĕ 9 уйăхра районĕпе пĕтĕмпе продукци 1104,7 миллион тенкĕлĕх туса кăларнă пулсан, пирĕн предприятипе вăл 670,7 миллион тенкĕпе танлашать. Ку кăтарту иртнĕ çулхи çав вăхăтринчен 64 процент пысăкрах. Предприятире 393 çын ĕçлет. Вĕсен уйăхри вăтам ĕç укçи 23504 тенкĕпе танлашать.

Предприятире автомашинăсен çурма прицепĕсене туса хатĕрлетпĕр. Кăçал вĕсене 427 туса кăларнă. Продукцие Чăваш Республикинчи предприятисем кăна мар, ытти регионрисем те туянаççĕ.

Кивĕ цехсенче прицепсене хĕç тимĕртен тунă пулсан, çĕнĕ цехра алюмини цистернисем туса кăларатпăр. Тĕнчипе те кун пек цистернăсем хатĕрлекенсем çук. Швецире, Швейцарире, Америкăра тата Италире туса кăларнă хальхи çĕнĕ оборудованисем вырнаçтарнă. Ку цехра çутă тĕслĕ нефть продукчĕсем (бензин, дизель топливи т. ыт. те) турттармалли прицепсем туса хатĕрлетпĕр.

Производство культури тивĕçлĕ шайра, тухăçлă ĕçлеме майсем туса пама тăрăшатпăр. Çĕнĕ технологисем пурте производство калăпăшне ӳстерме, пысăк тӳлевлĕ хушма ĕç вырăнĕсем йĕркелеме май параççĕ.

Хальхи вăхăтра «Промтрактор-Вагон» предприятипе пĕрле вĕтĕ пĕрчĕллĕ продуктсем турттармалли вакунсем туса кăларассипе инноваци проектне хатĕрлетпĕр.

Н.Г. ВАНЕРКИН, «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики» уçă акционер обществин генеральнăй директорĕ:

– «Моргаушская» чăх-чĕп фабрики 2011 çулхи 9 уйăха тупăшпа вĕçлерĕ. Пĕтĕмпе чăхсенчен 51,4 миллион çăмарта илнĕ. Ку вăл пĕлтĕрхи çав вăхăтринчен 22 процент нумайрах. Чăх ашĕ 178 тонна туса илнĕ. Ку кăтарту та иртнĕ çулхи çав вăхăтринчен 59 процент пысăкрах.

Хальхи вăхăтра предприятире çăмарта тăвакан чăхсен йышĕ 215 пин пуç. Çулталăк пуçланнăранпа кунта вăй хуракансен уйăхри вăтам ĕç укçи 12751 тенкĕпе танлашрĕ. Иртнĕ çулхинчен вăл 4 процент ӳсрĕ. Палăртса хăвармалла, чăхсен шучĕ çултан-çул ӳссех пырать.

Оборудованисене çĕнетсе пынипе тата инноваци технологийĕсене пурнăçа кĕртнĕ май 2012 çулта чăх-чĕп фабрикинче çăмарта туса илессине 80 миллион штука, аш-какай туса илессине 300 тоннăна çитерме палăртатпăр. Палăртнă чухлĕ продукци илес тесен предприятие комбикорм хатĕрлеме çуллен 9000 тонна тырă кирлĕ. Умри çак чикĕсене пĕтĕмпех пурнăçлама пултаратпăр тесе шутлатпăр.

Б.В. АНДРЕЕВ, Муркаш райпо канашĕн председателĕ:

– Потребительсен рынокĕнче хальхи хаксемпе шутласан пур суту-илӳ предприятийĕсенче ваккăн сутмалли тавар çаврăнăш калăпăшĕ кăçалхи 9 уйăхра 578,3 миллион тенкĕпе танлашрĕ. Иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан ку вăл 117 процент пулать.

Çак хисепре Муркаш райповĕн тӳпи 58 процентпа танлашать. Ваккăн сутмалли тавар çаврăнăш калăпăшĕ пирĕн предприятисенче 9 уйăхра 335,4 миллион тенкĕ пулчĕ. Иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан ӳсĕм – 20,6 процент.

Райпон пур предприятийĕсенче те тавар запасĕ пĕтĕмпе 62 миллион тенкĕлĕх е 43 кун сутă тумалăх.

Продукци хатĕрлевĕн çаврăнăшĕ те ӳссех пырать. 9 уйăхра вăл 42,9 миллион тенкĕпе танлашрĕ е иртнĕ çулхи çав вăхăтринчен 8 процент пысăкрах.

Муркаш райповĕн производство ĕçĕ-хĕлĕнче те ӳсĕмсем курăмлă. Çăкăрпа çăкăр-булка изделийĕсене 677,1 тонна пĕçерсе кăларнă. Ку та иртнĕ çулхи çав вăхăтринчен 8 тонна нумайрах. Суту-илӳ организацийĕсенче вăй хуракансен уйăхри вăтам ĕç укçи 12797 тенкĕпе танлашать.

Ыран – Ял хуçалăхĕнче тата продукци тирпейлекен промышленноçра ĕçлекенсен кунĕ

Çĕр ĕçченĕ пĕччен мар

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

Районти чăх-чĕп ĕрчетекен хуçалăх çĕнĕ технологие вăя кĕртнипе республика шайĕнче малти вырăнсене йышăнать. Ăрат çĕнетес тĕллевпе чăх-чĕп, çăмарта туянма 688 пин тенкĕ укçа куçарса панă.

Паянхи пурнăç çĕнĕрен те çĕнĕ технологисене вăя кĕртме ыйтать, машинăпа техника паркне çĕнетесси те мала тухать. Çавна май хуçалăхсем ку тĕлĕшпе 57 миллион тенкĕне яхăн укçатенкĕ тăкаклана, çăмăллатнă кредитсем илнĕ, ку енĕпе патшалăх 30 миллион та 174 пин тенкĕ саплаштарнă. Çаван пекех хуçалăхсем кăçал тепĕр çĕнĕлĕхпе усă курма пултарчĕç: Чĕмпĕр хулинчен йӳнĕрех хакпа сĕрмелли-çунтармалли материал кӳрсе килчĕç.

Тĕрлĕ сăлтавсене пула чылай региона, вăл шутра пирĕн тăрăхра та, çум курăк ешерекен пусă çаврăнăшне кĕртмен çĕр лаптăкĕсем самайланчĕç. Çак ыйтăва вăхăтра Раççей тата Чăваш Правительствисен шайне çĕклерĕç, ятарлă хушу кăларчĕç. Çапла вара районта та ку енĕпе çине тăрса ĕçлеме пуçларăмăр. Кăçал 841 гектар çинче агротехника ĕçĕсем, 650 гектар çинче ака ĕçĕсем туса ирттернĕ, малашне те çак ĕçпе çине тăрса тимлĕпĕр, çĕр-анне пире тăрантаракан пулнине манмăпăр.

Кăçалхи сакăр уйăхра ял хуçалăх ĕçне аталантарма патшалăх района 60 миллион та 456 пин тенкĕ укçа уйăрнă. Вăл шутран выльăх-чĕрлĕх ĕрчетме пĕтĕмĕшле 21 миллион та 22 пин тенкĕ, ял хуçалăх тĕрлĕ культури валли 7 миллион та 343 пин тенкĕ килнĕ, ытти пайĕ – ку тĕлĕшри тĕрлĕ ĕç-хĕл валли.

– Çанталăк условийĕ çĕр ĕçченне тĕрлĕ енлĕ тĕрĕслет: е виçесĕр типĕ, е тăтăш çумăр. Çав хушăра вара уй-хир ĕçченĕн мĕн акни-лартнине пуçтарса кĕлете хывма тăрăшмалла. Ял хуçалăх культурин паянхи тухăçĕ çĕр ĕçченне савăнтарать-и?

– Кашни çĕр ĕçченĕ пĕр тĕллевпе тимлет. Оперативлă кăтарту çирĕплетнĕ тăрăх паянхи кун тĕлне районти хуçалăхсем 14 пин те 446 гектар çинчен 36 пин тонна (бункер виçипе) тĕш тырă пухса кĕртнĕ. Пĕр гектар пуçне тивекен вăтам тухăç 25 центнерпа танлашать. Чи пысăк кăтарту Ильич ячĕпе хисепленекен (32,8 ц), «Ударник» (31,7 ц), Суворов яч. хис. хуçалăхсенче (29,1 ц).

Çĕр ĕçченĕ халĕ çанталăк условийĕсене кура «иккĕмĕш çăкăр» пуссинче тимлет. Ку таранччен 600 гектар çинчен 70 пин те 500 тонна çĕр улми пухса кĕртнĕ, çакă пĕтĕмĕшле лаптăкăн 47 проценчĕ пулать. Пĕр гектар пуçне тивекен вăтам тухăç 125 центнерпа танлашать. Хальлĕхе çак ĕç çăмăллăнах пымасть пулин те мĕн лартнине пуçтарса илессе шанатпăр.

– Эсир ертсе тата тытса пыракан ĕç-хĕл анлă пĕлтерĕшлĕ. Хăвăр çуралса ӳснĕ тăрăхра эсир, кунти ĕçченсем шаннине кура, вунă çул ытла хуçалăх тилхепине тытса пыратăр, район шайĕнче сирĕн хуçалăх кăтартăвĕ япăххисен шутĕнче мар. Эсир ĕçе кӳлĕннĕ вăхăта тата паянхи тапхăра еплерех сăнлама пултаратăр?

– Кирек епле çыннăн та хăй тивĕçне тулли кăмăлпа пурнăçламалла: уй-хир ĕçченĕ-и вăл е ертӳçĕ. Чи пĕлтерĕшли вара кашнин хăй хыççăн ырă йĕр хăварма тăрăшмалла.

Паллах, икĕ тапхăра сăнлама йывăр, мĕншĕн тесен эпĕ çак тивĕçе пурнăçличчен те тăван хуçалăхшăн тата тавралăхшăн ыттисем ырми-канми тăрăшнă. Паянхи пурнăç вара тăтăшах çĕнĕлĕхсен шыравĕнче пулма хистет. Пĕтĕмĕшле илсен тĕрлĕ программа ĕçленипе Уйкас Янасал ял тăрăхне çĕнĕ сăн-сăпат çапрĕ тесен йăнăшмастăп пулĕ. Пире ытларах Н.В. Никольский ячĕпе пĕлеççĕ. Ун тивлечĕпе чылай ырă ĕç пурнăçланчĕ, вĕрентӳпе кану центрĕ ĕçлени те пирĕншĕн çĕнĕлĕх. Халăх пурнăç условийĕ пур енлĕ ырă еннелле сулăнчĕ, кашни яла асфальт çул çитернĕ тата ытти те.

– Ильич ячĕпе хисепленекен хуçалăх юлашки тапхăрта хамăр ĕçченсем тăрăшнипе, патшалăх шайĕнчи тĕрлĕ программа пурнăçланнипе самай çирĕпленчĕ. Пĕтĕмĕшле илсен районта пирĕн хуçалăх малтисен ретĕнче пырать.

– Юлашки тапхăрта пурнăçланă хăш ĕç-хĕле эсир курăмлисен шутне кĕртетĕр тата вĕсен витĕмĕпе хуçалăх вырăнтан тапранчĕ теме пултаратăр?

– Халĕ ĕçлесси – малашлăх çинчен шухăшласси. Юлашки çулсенче пурнăçланă çак ĕçсене эпĕ курăмлисен шутне кĕртме пултаратăп. Районти хуçалăхсенчен маларах сахал тăкаклă, 500 пуçлă çĕнĕ йышши сысна ферми хута ятăмăр. Машинăпа трактор паркне тĕпрен улăштартăмăр, юлашки икĕ çулта 17 миллион тенкĕлĕх тĕрлĕ техника туянтăмăр.

Хуçалăх халĕ пахалăхлă вăрлăх туса илес тата сутас енĕпе тĕллевлĕ ĕçлеме пуçларĕ. Çавна май тĕш тырă тупăшĕ пĕр гектартан 30 – 35 центнера çитрĕ. Тĕш тырă тасатмалли тата типĕтмелли комплекс хута ятăмăр. Çакăнтан пĕр талăкра çĕр тонна пахалăхлă тырă тухать.

Выльăх-чĕрлĕх йышне пĕр шайрах тытса тăма тăрăшатпăр. Çавна май иртнĕ çулхи тĕрлĕ чăрмава пăхмасăр выльăх кĕтĕвне сыхласа хăварма тата аталантарма пултарнишĕн 2 миллион та 556 пин тенкĕ патшалăх пулăшăвне илтĕмĕр. Ферма-сарайсене тĕпрен çĕнетессипе, юсассипе тăтăшах ĕçлетпĕр. Акă çамрăк выльăхшăн йывăç вите вырăнлăрах пулнине шута илсе çĕр пуç тăмалăх çĕнĕ çурт çĕклерĕмĕр.

Юлашки çулсенче тĕрлĕ сăлтавсене пула çамрăк специалистсем тата ытти ĕçченсем ял хуçалăхĕнче ытлах юласшăн мар. Çурт-йĕр çĕклесси çăмăллисен шутĕнче мар. Кунта вара патшалăхăн тĕллевлĕ программи питĕ вырăнлă. Хуçалăхра ĕçленĕ хушăра 15 çемье ытла çурт-йĕр тĕпрен çĕнетрĕ, каялла тавăрса памалла мар субсидие тивĕçрĕ. Хуçалăхра вăй хуракансен ĕç укçи калăпăшне, пысăках мар пулин те, ӳстерме тăрăшатпăр.

Усă курман çĕр лаптăкĕсене пусă çаврăнăшне кĕртессипе йышăннă Указа пурнăçланă май хуçалăхра 175 гектар çум курăк пуснă çĕр сухаларăмăр, малашне ку ĕçе татах та анлăрах пурнăçлама палăртатпăр.

– Çапах та паянхи ертӳçĕне кăмăла çĕклекенни е пăшăрхантараканни ытларах?

– Пурнăç вĕсемсĕр иртмест пулĕ. Çапах та мана патшалăх шайĕнче ял хуçалăхне чылай енлĕ ырă витĕм кӳни савăнтарать. Çăмăллатнă тĕрлĕ кредит парасси, субсиди уйăрасси, ăратлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси, минераллă удобрени туянасси тата ытти çăмăллăхсем вăйра тăни паянхи кун ял хуçалăхне аталанма май парать.

Çав хушăрах пăшăрхантараканни те пур. Никамшăн та вăрттăнлăх мар, сĕрмелли-çунтармалли материалсен, электроэнерги хакĕсем ӳсни самай йывăрлăх кӳрет, хуçалăх, район аталанассинче ура хурать. Паллах çак ыйтăва çӳлти шайра татса пама май пулсан аваннăмĕ.

– Уяв умĕнхи калаçăва ырă еннелле куçарсан вырăнлăрах пулĕ.

– Агропромышленность комплексне аталантарассишĕн мĕн пур вăй-хала шеллемесĕр тăрăшнă ĕçченсене тата тивĕçлĕ канăва тухнисене тав сăмахĕ калас килет. Ял хуçалăх ĕçĕхĕлĕ анлă пĕлтерĕшлĕ, кунта чылай отрасль пĕрлешет. Тĕллевĕ вара пурин те пĕрре – паян ĕнерхинчен тупăшлăрах, ыран паянхинчен ăнăçлăрах ĕçлесси, çапла майпа хамăр пурнăçа тухăçлăрах тăвасси.

Ял хуçалăхĕнче вăй хуракансене ятран уйрăммăн асăнмăп, пурте май пур таран тăрăшса ĕçлеççĕ. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре тăрăшакансем аш-пăш, сĕт-çу тата ытти продукцие ытларах туса илессишĕн тимлеççĕ. Район экономикин аталанăвне хресчен (фермер) хуçалăхĕсемпе хушма хуçалăх тытакансем те пысăк тӳпе хываççĕ. Пуласлăх хамăр ачасенче тетпĕр. Вĕсем те аслисенчен кая мар тимлеççĕ, уй-хирте тăрăшаççĕ, тĕрлĕ ĕç пурнăçлаççĕ. Халĕ аслисемпе пĕрле «иккĕмĕш çăкăр» пуссинче вăй хураççĕ.

Çĕр ĕçченĕ пĕрлехи тулли пӳлмешĕн, тулăх çăкăртăваршăн тимлет. Çак тĕллеве пурнăçлама вара унăн çирĕп сывлăх, чăтăмлăх, вăрăм кун-çул пултăр.

Р. ИЛЛАРИОНОВА
каласнă.

Çамрăк çемьесем хваттерлĕ пуласçĕ

2011–2015 çулсем валли йышăннă «Пурăнмалли çурт-йĕр» программăн «Çамрăк çемьесене пурăнмалли çурт-йĕрпе тивĕçтересси» подпрограммипе хăйсен пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма районта 155 çамрăк çемье черетре тăрать. 2011 çулта 16 çамрăк çемье валли ку тĕлĕшпе укçа-тенкĕ уйăрса панă: 2398,319 пин тенкĕ федералла бюджетран тата 4311,046 пин тенкĕ республика бюджетĕнчен, вырăнти бюджетран 1227,171 пин тенкĕ.

2011 çулхи сентябрĕн 23-мĕшĕнче хваттер туянма е харпăр хăйĕн уйрăм çуртне тума татах 7 çамрăк çемье социалла тӳлев илме свидетельствăсене тивĕçрĕ. Кусем вĕсем Сергей Анатольевич Чаплин (çемьере 4 çын), Валентина Ивановна Михайлова (4 çын), Станислав Вячеславович Лукин (4 çын), Сергей Николаевич Смирнов (4 çын), Сергей Алексеевич Иванов (3 çын), Александр Юрьевич Егоров (4 çын), Мальвина Витальевна Архипова (2 çын).

Çамрăк çемье представителĕсене свидетельствăсене савăнăçлă лару-тăрура Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕ Юрий Александрович Иванов пачĕ. Вăл çавна палăртрĕ. Çын тивĕçлĕ пурăнать, ĕçре ӳсĕмсем тăвать пулсан ăна патшалăх та пулăшусăр хăвармасть. Çамрăксене вăл ăнăçу та телей сунчĕ. Хăйне май çамрăксем район администрацийĕн пуçлăхне çĕнĕ пӳрт ĕçкине йыхравлама пулчĕç.

В. ШАПОШНИКОВ.

Сăн ӳкерчĕкре: акă вĕсем, свидетельствăн телейлĕ хуçисем.

Кил тата хушма хуçалăх

Пахчари юрату сукмакĕ

Ял хуçалăх ĕçченĕсен кунĕ умĕн

Çулсем иртнине пăхмасăрах тăпăл-тăпăл кĕлеткеллĕ, шурă çÿçлĕ Иван Тихонович Тихонов мана урамра кĕтсе илчĕ. Иртнĕ кунсенче 70 çул тултарчĕ пулин те ĕç пурнăçне çĕр ĕçне халаллана арçыннăн сăн-питĕнчен йăл-кулă каймасть. Сывлăх сунса виçĕ сăмах калаçма ĕлкĕриччěнех хресчен чунлĕскер мана хăйсен кил хуçалăхне виçĕ енчен хупăрлакан Сурăм юхан шывĕн илемĕпе паллашма йыхравларĕ. Ман шутпа питĕнчи савăнăç куллн унăн ĕç пурнăçĕ ăннине çирĕплетет çеç. Тавах куншăн.

Тараватлă ĕçĕшĕн пĕрре мар Раççей Федерацийĕн Ял хуçалăх министерствин Хисеп грамотине тивĕçнĕ Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ агрономĕпе йăмрасен сулхăнĕпе иртнĕ май унăн ачалăхĕ, килти хушма хуçалăх аталанăвĕ, çемье пурнăçĕ, çĕр ĕç культури çинчен сăмах пуçарса ятăмăр. Çĕр ĕçĕнче пуян опыт пухнă И. Тихоновăн кунта кашни ыйту çинех тулли хурав пур.

– Манăн кукаçие 2 гектар сад тытнăшăн (унта çырла тĕммисемсĕр пуçне 750 улмуççи пулнă) 1921 çулта персе вĕлернĕ. Тепĕр 10 çултан тĕппипех раскулачить тунă. Асаттен çĕр ĕç юратăвĕ мана куçнă пулас, – пахчари улмуççисемпе чечексен йăранĕсем çине пăхса илчĕ манăн аслă юлташăм.

Иван Тихонович хăй агроном çулне суйласа илнине те шăпа суйлавĕ тет. 1959 çулта шкул пĕтернĕ темиçе çамрăкпа пĕрле вăл та Казахстана ĕçлеме тухса каять. Çурçĕр Казахстанра 1 çул анлă профильлĕ механизатора вĕренет. Хыççăн уçман çĕрсенче трактор штурвалĕ умĕнче ака-суха ирттерсе çĕр ĕçне хăнăхать. Техникăпа туслашни Ивана салтакра та кирлĕ пулса тухать. Çавăнпах вăл хăйĕн малашнехи пурнăçне те инженерта курма пуçлать. Ку специальноçе алла илме салтакрах малтанхи экзамен тытать. Ăна вĕренме кĕме яраççĕ. Ял хуçалăх институтне çитсен вара инженерсен конкурсĕ пысăкрах (пĕр вырăна 7 çын) пулни-ши е экзамен тытаймасан каялла салтака кайма шиклентернĕрен-ши, Иван Тихонов кĕçĕн лейтенант агроном специальноçне суйласа илет (кунта пĕр вырăна 4 çын пулнă).

– Çапла агроном пулса тăтăм та çĕр ĕçне чунпа юратса пăрахрăм. Панклири «Ленинец» колхозра 1969 çулта агрономра ĕçлеме пуçларăм та 2001 çулхи раштав уйăхĕн 25-мĕшĕччен çак ĕçре вăй хутăм, – аса илчĕ Иван Тихонович ĕçпе кушăрханă аллисемпе шурă çÿçне шăлса якатса çак хушăра хăй мĕнле ответлă ĕçсенче тимленине.

Мăшăрĕпе Мария Кузьминичнăпа (вăл вăхăтсăр пурнăçран уйăлнă) Иван Тихонович 2 ывăлпа 2 хĕр çуратса пурнăç çулĕ çине каларнă. Хăйĕн ĕç ĕмĕрĕнче яланах унпа юнашар пулнă П. Давыдов, А. Кузьмин, Г. Афанасьев, Л. Никитин, И. Шивирев, В. Ананьев, Р. Васильева, С. Максимова, Л. Тимофеева, Т. Петрова ĕçтешĕсене палăртнă чух ĕç ветеранĕ 1976 çулта хамăр ентеш, ЧР ял хуçалăх министрĕн çумĕ, Социализмла Ĕç Геройĕ Е. Васильева сĕннипе çĕр улми вăрлăхĕ туса илекен лабораторие ĕçлеттерме пуçланине те сиктерсе хăвармарĕ. Хуçалăхра уншăн явапли те унăн мăшăрĕ Мария Кузьминична пулнăччĕ-çке.

Ĕç ĕмĕрĕн ытларах пайне «Ударник» совхоз аталанăвне хывнăран килти хушма хуçалăхри ĕçсене амăшĕпе мăшăрĕ тата ачисем туса пынине те пытармарĕ ветеран. «Манран сĕнÿ ыйтатчĕç те эпĕ йĕркелеттĕм», – терĕ кунта И. Тихонов.

Çемйипех çĕр ĕçĕнчен катара тăман аслă юлташăмăн пахчинчен паян тухас та килмест. Виноград хупласа илнĕ калаçса лармалли вырăн **(сăн ÿкерчĕкре),** пахчари дача çуртне илсе каякан юрату сукмакĕ, пысăк пуçлă купăста йăранĕ, хĕвел питтине вырнаçтарнă вĕллесем... Çак тĕлте манăн И. Тихоновăн теплицисем çинче чарăнса тăрас килет. 4х9 метр калăпăшлă, кантăкран ăсталанă пĕрремĕш теплица пахчара 1975 çулта çĕкленсе ларнă. «Тăпра кивелет теççĕ. Йĕркеллĕ пăхса тăрсан вăл хăйĕн пулăхлăхне чакармасть», – терĕ пахчаçă мана теплицăна кĕрсе пăхма сĕнсе. Теплица уссине курнăскер тивĕçлĕ канăва тухсан хăйĕн конструкцийĕпе поликарбонатран тепĕр теплица ăсталаса ĕçлеттерме пуçланă.

Пахчаран тухнă май çĕр улми ани патĕнчен иртрĕмĕр. «Иккĕмĕш çăкăрăн» 8 тĕслĕ сорчĕ вырăн тупнă И. Тихонов пахчинче. «Скарб», «адретта», «трезор», «благит», «дубрава», «лилея», «бриз», «любава» – кашнин пиркиех пахчаçă-агроном ырласа калаçать.

...Йÿçкасси ял тăрăхĕнчи Тури Панклире пурăнакан Иван Тихонович Тихоновăн килти хушма хуçалăхĕнчен хĕвел анăçалла сулăнсан тин тухрăм. Кĕрхи ăшă çилпе йăмрасем кăмăллăн кашлатчĕç. Вĕсен пăшăлтатăвĕнче йывăççем тăван тавралăх илемĕшĕн тăрăшакана тав тунине илтрĕм. «Ырă ĕç ырăпа таврăнать», – тенине шута илсе ишĕлÿрен катара тăракан çырмаçатра илемĕпе киленсе автобус чарăнăвĕ еннелле утрăм. Тараватлă ĕçĕшĕн «Ĕçри хастарлăхшăн» тата «Тава тивĕçлĕ ĕçшĕн» медальсене тивĕçнĕскер эпĕ ялтан тухса кайиччěнех кил умĕнчи йăмрасен хÿттинче тăрса юлчĕ... **А. БЕЛОВ.**

Ял малашлăхĕ

Сад ĕрчетекенсен ыранхи кунĕ

Официаллă кăтартусемпе Раççей Федерацийĕнче паян 60 миллион çынна яхăн килти хушма хуçалăх тытать. Вĕсем тата сад участокĕсемлĕ гражданссем çĕр-шыври ял хуçалăх продукцийĕн 50 ытла процентне туса илеççĕ.

Килти хушма хуçалăхсенчи тата сад участокĕсенчи çĕр лаптăкĕсем çинче хресчен ĕçне парăннисен производство кăтартăвĕ пĕтĕм çĕр улмин 80 проценчĕпе, сĕтĕн 50 проценчĕпе, аш-какайăн 40 проценчĕпе танлашать. Çак пуянлăха Раççей пасарĕсемпе хуласенчи сентресем çине туллин кăларассипе ĕçсем вăй илсе пыраççĕ. Мĕншĕн тесен Раççей хальлĕхе нумай продукцие çĕр-шыва чикĕ леш енчен илсе кĕртет.

«Эпир паян кунччěнех çĕр улмине Египетран, кишĕре Чилирен илсе килетпĕр. Ку пире чыс тумасть. Пирĕн хамăр пахчаçăсене, сад тытакансене пасарсемпе хуласенчи суту-илÿ учрежденийĕсене тухма çул уçса памалла», – терĕ дачниксен малашлăхĕпе кăсăкланса ирттернĕ пресс-конференцире Раççейри сад тытакансен союзĕн председателĕ тата РФ Патшалăх Думин депутачĕ Олег Валенчук. Ун шучĕпе çивĕч ыйту пахчаçăсене ытлашши продукципе хуласене кĕртменнипе тата автоçулсем хĕррипе сутма чарнипе кăна тухса тăмасть. Тĕп çитменлĕх вăл – килти хушма хуçалăхсене аталантарма патшалăх пулăшăвĕ çукки е çителĕксĕрри.

– Владимир Путин «Сад тытакан – Раççей тĕкки» проекта ырлани Ял хуçалăх министерстви урлă вырăнсене тĕллевлĕ укçа-тенкĕ яма пулăшрĕ, – савăнăçне пытармарĕ Олег Валенчук.

Асăннă «тĕллевлĕ укçа-тенкĕ» 2011 çулта 200 миллион тенкĕпе танлашнă. «Çитес çул валли ку суммăна палăртманха», – терĕ çавăнтах РФ ял хуçалăх министрĕн çумĕ Шамиль Вахитов. Унăн сăмахĕнчен патшалăх пулăшăвĕпе усă курма Ял хуçалăх министерствинче регионсенче хатĕрленĕ экономика пĕлтерĕшлĕ программăсене хÿтĕлемелле пулнă. Кунта Федерацири 10 субъект çеç çаврăнăçуллă пулнă. Вĕсем: Липецк, Ленинград, Чĕмпĕр, Томск, Новосибирск облаçĕсемпе Тутарстан Республики, Буряти, Хакаси тата Алтайпа Краснодар крайĕсем.

«Вĕсен проекчĕсемпе уйăракан укçа-тенкĕ сад пĕрлешĕвĕсене тирпейилем кĕртме, инфраструктурăна лайăхлатма кайĕ», – пĕлтерчĕ Шамиль Вахитов.

«Сад тытакансене ял хуçалăх продукцийĕ туса илекенсемпе танлаштарсан вĕсен те тарифсемшĕн ял хуçалăх продукцийĕ туса илекенсем пек тÿлемелле. Ку вăл пуссем. Çав вăхăтрах сад тытакансем хăйсене ял халăхĕ пек курасшăн. Вĕсем патне почта та пытăр, кирлĕ чух васкавлă пулăшу та çиттĕр. Ку вара тарифсем ÿсесси патне илсе çитерет. Çавăнпа та сад тытакансене паян ял хуçалăх продукцийĕ туса илекенсемпе е ял çыннисемпе танлаштарасси – умра тăракан ыйту», – каларĕ Раççейри сад тытакансен союзĕн ертÿçи Иван Юдинцев.

Пĕтĕмлетсе каласан сад ĕрчетекенсен статусĕпе тата вĕсене çитес çул валли бюджетран пулăшу пăхса хăварассипе хальлĕхе татăклă хурав çук-ха.

А. УЗБЕКОВА.
«Российская газета».

Çĕр хуçисем валли

Саккунлă чикĕсем

РФ Экономика аталанăвĕн министерстви çĕр участокĕсене çĕр пайĕпе уйăрса панă чух чикĕлев ыйтăвĕсемпе пăхнă требованисем çинчен хушу хатĕрленĕ.

Хушăва Юстици министерствинче регистрациленĕ те. Вăл ĕçлеме пуçларĕ.

Асăннă хушу иртнĕ çулла çĕр пайĕсен шучĕпе çĕр участокĕсем уйăрса парассине йĕркелеме йышăннă саккун валли нормативлă акт пулать. Ял хуçалăх пĕлтерĕшлĕ çĕрсене массăллă приватизацилесси ку таранччен çĕр-шывра васкавлă процедурăпа пулса иртрĕ. Çавна пула çĕр хуçисен вăхăтра татса паман ыйтусем те нумай. Унччěнхи çулсенче колхоз-совхоз харпăрлăхĕнче шутланнă çĕрсене приватизаци тапхăрĕнче ял çыннисене çĕр участокĕсен шучĕпе мар, çĕр участокĕсен пайĕсем тесе пайласа пачĕç. Апла калани вăл е ку вырăнта миçе гектар пай çĕрĕ пулнине çеç палăртать. Çапла вара ял çыннисем нумай чухне «абстрактлă» çĕр хуçисем пулса тăчĕç. Çав çĕрсене чăнах харпăрлăха куçарасси питех те чăрмавлă пулса тухрĕ. Вăл пайсене пысăк компанисем пĕчĕк хакпах туянса кайни те практикăра пĕрре мар тĕл пулчĕ.

Çĕр пайĕсем тĕлĕшпе хресченсем сутлашасси нумайланчĕ. Унăн сăлтавĕ – пайсем уйăрассипе ирттернĕ пĕрлехи пухусенче çав çĕр чиккисене тĕп-тĕрĕс кăтартманни. Çав карттăсем никама та хÿтĕлеменни – паянхи чăнлăх. Практикăра çĕр участокĕсене пĕр çĕрте «ÿкернĕ» те тепĕр çĕрте уйăрса панă тĕслĕхсем пулчĕç. Çĕр пайĕ ыйтакан çын вырăнти хаçатра уйăрса паракан çĕр участокĕн вырăнне те тĕптĕрĕс кăтартмасăрах панă. Çакнашкал ахăрсаманара çĕрпе ĕçлессинче «пысăк бизнес» вăй илчĕ.

Çĕнĕ саккун маларах асăннă процедурăна уçăмлатрĕ. Кунти «выляв» йĕркине ура хучĕ. Хушура çĕр пайĕсене чикĕлессипе çирĕп йĕрке пур. Унпа килĕшÿллĕн уйăрса паракан çĕр пайĕн участокĕ ăçтарах вырнаçнине кашни çыннăн маларахах тĕп тĕрĕс пĕлмелле.

Елена КУКОЛ,
çĕр виçес ĕç инженерĕ.

Ыйту–хурав

Çĕнетессипе ĕçлемелле

Пахчара хура хурлăхан тĕмми вăйсăрланчĕ. Ăна çĕнетессипе паян ĕçлеме пулать-и тата юрать-и?

И. КОЛЕСНИКОВ.
Ильинка ял тăрăхĕ.

Вулавçă ыйтăвĕ çине хуравлама пысăк опытлă пахчаçăна тата агронома А. ШАРИКОВА чĕнтĕмĕр.

– Тĕрĕс ыйту тапратать хаçат вулакан. Вăл, телее, шăпах паян пурнăçламалли ĕç. Ялта пурăнакансем çырла тĕммисемпе лаптăкĕсене çĕнетсех тăмаллине пурте пĕлеççĕ. Анчах нумайăшĕн пахчинче 20 çултан та иртнĕ хурлăхан тĕммине курма пулать. Вĕсем çырла сахал тăваççĕ, хурт-кăпшанкăпа аптăраççĕ.

Хурлăхан тĕмми çырла тума тытăнсан малтанхи 6–7 çулне тухăçпа савăнтарать. Тураттисене вăхăтра касса, тасатса тăманни çак вăхăта 5 çул таран кĕскетет. Çавăнпа та вĕсене çуллен тымартан тухакан 2-3 хунав хăварса çамрăклатмалла. Ку майпа 5 çулхи тĕмре тĕрлĕ ÿсĕмри 10–15 турат пулмалла.

Вăхăт иртнĕçемĕн 7–8 çулхи тĕмсене улăштарма тытăнмалла. Çамрăккисем вăй илсе пынă тапхăрта кăшт ватăраххисем сире çырласемпе туллин тивĕçтерĕç. Каярахпа вĕсене кăкласан та эсир çимĕççĕр юлмăр.

Ытлашши туратсене иртесси тата çĕнĕ тĕмĕсем лартасси – паян пурнăçламалли ĕç.

Хура хурлăхана ĕрчетме кăткăс мар. Сыпмалли туратсене кĕркунне кăпăшка та пулăхлă тăпра çине тăрăнтарса хăвармалла та тепĕр çултан вĕсем куçарса лартма хатĕр пулаççĕ.

Юлашки вăхăтра селекционерсем чир-чĕре парăнман, шултра çырлаллă, тутлă та сĕткенлĕ сортсем чылай кăларнă. Вĕсен шутĕнче: Ядреная, Перун, Сокровище, Илья Муромец, Ёлочка, Ароматная, Дачница, Русалка, Вологда сортсем.

Пахалăхĕ пысăк

Хаçатра тĕрлĕ канашсем нумай пичетлеççĕ. Барбарис пирки каласа паракан пур-ши? Унпа сиплев ĕçĕнче епле усă курма пулнине пĕлес килет.

Е. САФРОНОВА.
Мăн Сĕнтĕр сали.

Вулакан ыйтăвĕпе районти тĕп больницăн пĕтĕмĕшле практика врачне В. ГРИГОРЬЕВĂНА паллаштартăмăр.

– Пахчари кашни ÿсен-тăранах сывлăхшăн усăллă. Барбарис та вĕсен йышнех кĕрет. Барбарис – 1,5–3 метр ÿсекен, ăшша тата çутта юратакан тĕм. Унăн тымарĕ вăйлă аталанать, хăй вăрах ÿсет. Анчах вăл сиплĕ ÿсен-тăран шутланать. Сиплев ĕçĕнче ытларах тымарĕпе тата çулçипе усă кураççĕ. Барбарисăн çулçисенче С тата Е йышши витаминсем, пан улми тата лимон йÿçекĕ пур. Тымарĕ вара барберин текен хутăшпа пуян, вăл паха та питĕ витĕмлĕ эмел тума каять. Çак эмел пĕвер чирĕ аптратсан, ват хăмпинче чул пухăнсан ăнăçлă сиплет.

Октябрён 10-мёшё – Пётём тёнчери психика сывлăхён кунё

«Ытларах кулăр, савăнăр»

Психика тёлёшпе сывлăхлă пулмасан паян пурнăç юхăмёнчен «тухса ўкме» те пулать. Хăвăрт пулса иртекен улшăнусене, çёнёрен те çёнё пулăмсемпе япаласене психика тёлёшпе сывлăхлă çын çăмăллăн йышăнма пултарать. Паянхи калаçу шăпах çакăн тавра пулё те: редакци хăни – Муркашри тёп больницăри психиатр врач Л.М. ИВАНОВА.

– Лариса Меркурьевна, психика çын аталанăвён хăш тапхăрёнче никёсленет?

– Психика сывлăхё ача пилёк çула çитиччен никёсленет. Çавăнпа та çак тапхăрта ашшё-амăшён уйрăмах тимлё пулмалла. Ача вăл хăйне уйрăм çын, çакна курма вёренмелле. Ачан çемьере ўссе аталанмалла. Юрату, хўтлёх пуррине, пёр-пёрне хисепленине (çав шутра ăна та) курса тăмалла унăн.

Пысăклансан вара кашни çыннăнах тёрлё йывăр ыйтăва та хăйён татса пама вёренмелле, пёлмелле. Çакă никамран та пулăшу ыйтмасăр тенине пёлтермест, специалистсенчен канаш ыйтма ўркенмелле мар. Пурнăçăн унăн хăйён йёркисем пур, психологи саккунёсем те.

Пёр тёслёх илсе кăтартăпăр. Çыннăн пурнăçне тахçанах кётнё савăнăçлă лару-тăру килсе çитет. Анчах та çак савăнăçпа «ачашланма», ăна ытларах тăсма шутламасть вăл. Çапла вара пурнăçри ырăлăх нумайлăх йёр хăвармасть. Кăмăла пăсакан самантсене вара пачах хирёçле йышăнать: кўренўсене нумайлăха асра тытать, тăтăшах çав япăх вăхăт пирки шутлать. Çапла пурнăçа тёрёс мар йышăнса чирлесси патне те çитме пулать. Тёрёссипе вара савăнăçпа ытларах киленсе пурăнмалла, япăххине тўрех манма тăрăшмалла.

– Психика енчен сывлăхлă пулас тесен канăва мёнле йёркелемелле?

– Туллин тата пётём кăмăлтан канмалла. Шел те, нумайăшё канăва йёркелеме пёлмест, тăрăшмасть те. Пушă вăхăта та усăллă канса ирттермелле. Пирён хамăрăн пурнăçа ырă самантсем кёртме тăрăшмалла, çак самантсене хамăра валли туса пымалла. Атту килёшмен ёçрен ытларах «ёçсёр аптăрани» стресс патне илсе çитерме пултарать. Çавăнпа та спортпа туслашмалла, çут çанталăкпа çывăх пулмалла, сывă пурнăç йёркине пăхăнмалла тата хамăрăн туйăмсене контрольлесе те тăмалла.

Тата тепёр паха ен пулмалла çынра – хăйён вăйне тата хăйне ёненни. Çакă шăпах йывăрлăхсене çёнтерме пулăшать те.

– Кашни кун хамăра лайăх кăмăл парнелес тесен ир мёнрен пуçланмалла?

– Ытларах кулăр тата савăнăр. Ирпе вăрансан чи малтан тумалли «ёç» – кулса илмелле. Кулнă чух хусканакан мышцăсем ёçленипе пуç миминче лайăх реакци пулать. Çапла сирён кăмăл та хăпарать.

Тепёр чух хăвăра япăх туятăр пулсан та телейлё çын пек тытмалла. Çапла «выляни» те кăмăл-туйăма пусăрăнма памасть. Хул-çурăма та яланах тўрё тытăр.

Оптимист пулмалла, хăвăра савăнăç парнелекен ёçсем пурнăçламалла. Сиксе тухакан ыйтусене татса памалла, пёрпёрин çине «тиесе пырса» вёсене пухăнма памалла мар. Япăх лару-тăрура та кулса илме ан манăр, туйăмсен хуçи пулăр. Вара эсир сывлăхлă та ăнăçуллă çын пулатăрах.

Н. НИКОЛАЕВА
калаçнă.

Ачасен канăвёпе сывлăхё

Кёркуннехи каникулта – лагере

Октябрён 10-мёшёнчен тытăнса район администрацийён вёрентў, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайё кёркуннехи каникул вăхăтёнче ачасене хула тулашёнчи лагерьсене канма ярас текенсенчен путевка туянма заявленисем йышăнма пуçлать. Пётёмпе пирён район валли 82 путевка уйăрса панă. Каникул вăхăтёнче ачасем лагерьте 7 кун канаççё.

Ашшё-амăшён путевка хакён 10 проценчё чухлё çеç тўлеме тивё (малтанласа путевка хакне 3090 тенкё тесе палăртнине шута илсен – 300 тенкё ытларах çеç), ытти 90 процентне ёçе пурнăçлакан орган тўлет. Хальлёхе вара лагерьсене суйласа илессипе конкурс пырать.

Путевка туянма заявлени çырнă чухне ашшё-амăшён е ачан саккунлă представителён çак документсене пёрле илмелле: ашшё-амăшён паспорчё, ачан çурални çинчен калакан хутăн копийё, вёрентў учрежденийёнчен – ача унта вёреннине çирёплетекен справка.

Тёплёнрех 62-0-92 номерпе шăнкăравласа пёлме пултаратăр.

Н. АНДРЕЕВА.

Полици хроникинчен

Пёчёклех «алă кукăртсан»...

Нискассинчи вăтам шкулта пуçламăш класра вёренекен икё шăпăрлан уроксем вёçленсен ял тăрăх экскурси ирттерес тенё пулас. Пёр пушă ларакан пурăнмалли суртăн котельнăйне кантăк çёмёрсе кёнё. Унтан вара çăмăллăнах – пўрте. Юрать-ха хăйсен усал шухăшне пурнăçлама май килмен. Йёркене пăсма, тўрё çултан пăрăнма часах пулать. Анчах та кайран ёмёр тăршшёпе çав таса марлăх йывăр чул пек çакăнса тăрё, пурнăç çулё çинче хёрес лартё.

Чёлхи хытă ёçленё-ха, пуçё вара?

Эрех ăшне «путсан» юнашар çын та шуйттан пек курăнма пуçлать пуль çав. Акă Пёрремёш Май выççăлккинче пурăнакан арçыннăн та çапла пулса тухнă. Кăнтăр кунёнче урамри шăплăха хăйён сассипе çурнă вăл. Ўсёрскер ялти пёр хёрарăма палласа илеймен-ши ёнтё? Темён те пёр каласа пётернё ăна, вёлерессипе хăратнă. «Çунтарса яратăп!» – тесе те перкелешнё. Халё вара выççăлккă «паттăрён» саккунпа килёшўллён явап тытмалла.

Пичете РФ Шалти ёçсен министерствин Муркаш район уйрăмён материалёсем тăрăх хатёрленё.

БЕТОН, РАСТВОР любых марок. Тел.: 38-87-78, 8-927-66-88-778. Песок, ОПГС (гравмасса), щебень. Тел.: 38-84-40, 8-927-66-88-440.
Доставка миксерами, самосвалами. 36-50.

14 ОКТЯБРЯ с 8-00 часов в районном Доме культуры Ульяновская обувная фабрика проводит выставку-продажу обуви из натуральной кожи производителей Ульяновск, Казань, Москва.

В Москву и Московскую обл. требуются: фасовщицы-упаковщицы,грузчики (кондитерские фабрики, молочное производство, снековая продукция, мясокомбинаты, склады). Питание, проживание предоставляются. Вахта 15/15, 20/20, 30/15, 30/30, 60/30. З/п от 25000 руб. (сдельная). Тел.: 8(8352)23-22-22. 5-5.

Продаю МЕТРОВЫЕ ДУБОВЫЕ ДРОВА 1 куб. м. – 1000 руб. Доставка по району. Тел.: 63-0-39, 8-908-307-07-44. Николай.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 6-9.

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Тел.: 8-906-131-32-75, 8-927-859-91-55. 4-5.

пластиковые ОКНА
Немецкое качество
Окна STAR
6-камерный профиль ПО ЦЕНЕ 3-камерного
скидки до 35%
подробности по телефонам: 8-9603101816
Пенсионерам доп. скидки
Офис продаж в здании рынка с.Моргауши
Окна стали дешевле...

Прогноз погоды

Местное время	суббота 8 октября 04:00	10:00	16:00	22:00	воскресенье 9 октября 04:00	10:00	16:00	22:00	понедельник 10 октября 04:00	10:00	16:00	22:00	вторник 11 октября 04:00	10:00	16:00	22:00
Облачность %																
Осадки мм																
Температура °С	+9	+12	+15	+14	+12	+15	+16	+13	+12	+13	+14	+13	+12	+15	+14	+14
Давление мм	743	744	745	745	746	748	748	747	746	747	747	743	740	740	740	739
Влажность %	88	81	72	91	95	83	63	75	78	82	76	79	89	89	91	87
Ветер м/сек	Ю-З 4	Ю-З 6	Ю-З 5	Ю-З 4	Ю-З 4	Ю 6	Ю 6	Ю 6	Ю 6	Ю 6	Ю 4	Ю 6	Ю 7	Ю 8	Ю 6	Ю 8
Солнце восход/заход		07:09	18:11			07:11	18:08			07:13	18:06			07:15	18:03	
Луна восход/заход		16:39	03:00			16:51	04:13			17:03	05:24			17:16	06:35	
фаза																

Пёлтерўсем. Объявления

Приглашаем всех, кого интересует дополнительный заработок. Возможность совмещать любой работой. Возраст и образование значения не имеют. Зонить по тел.: 8-960-310-01-29, 8-927-850-18-58. 1-5.

* * *

Куплю корову, бычка, телку в живом виде. Тел.: 8-905-029-61-39. 4-5.

* * *

Калайкасси ялёнче çăм арманё ёçлет, кану кунёсёр. Ирхине 7.00 сехетрен пуçласа. Тел.: 8-908-306-00-34, 65-2-33.

* * *

Продаем комбикорма. Тел.: 8-927-843-52-40. 3-5.

* * *

Требуется бригада вальщиков леса. Оплата – 1000 руб в день. Расчет в течение 10 дней. Тел.: 8-905-343-91-07.

* * *

Требуются рабочие на уборку овощей (капуста, морковь, свекла). Проезд, питание обеспечивается. Оплата от 350 руб. до 400 руб. в день. Тел.: 8-905-343-91-07.

* * *

Продаем пропаренные керамзитобетонные блоки, цемент, песок речной, гравмассу, керамзит. Тел.: 8-905-340-07-78. 5-5.

* * *

Ёне, вăкăр, тына, пăру, сурăхсем туянатпăр. Тел.: 8-903-063-07-57. 1-5.

* * *

Продаю телку для дальнейшего выращивания, возраст 10 месяцев, черно-пестрая. Цена договорная. Тел.: 8-917-650-62-48, 8-953-010-28-24.

* * *

Ёне, вăкăр, тына, пăру, сурăх туянатăп. Тел.: 8-905-343-60-63. 7-8.

* * *

Хаклă хакпа вăкăр, тына, ёне чёрё виçепе тата ашпа туянатăп. Тел.: 8-905-343-46-23. 4-5.

* * *

ТД «Лотос» реализует: профнастил, профили, трубы новые, б/у, трубы для ограды и ворот, краски, утеплители, поликарбонат, банные печи, мотоблоки. Монтаж систем отопления, изготовление теплиц, оград для полисадников. ВЫ ЗВОНИТЕ, МЫ ДОСТАВИМ! Тел.: 8-927-848-84-30. 3-5.

* * *

Требуются автомойщики на новую автомойку в с. Моргауши, муж., жен. от 20 до 40 лет. Подробности по тел.: 8-919-666-33-22, 8-927-847-45-08. 2-2.

* * *

Февралёнче пăруламалли хура тёслё ёне, апрелёнче пăруламалли тынашки сутатăп. Тел.: 8-960-300-20-62.

* * *

Куплю корову, бычка, телку, овец. Тел.: 8-905-342-39-43. 1-13.

* * *

В объявлении собственника земельной доли Комендантов Георгий Геннадьевич, о выделении земельного участка в счет земельной доли, о проведении собрания по согласованию местоположения границ, опубликованного в районной газете «Çёнтерў ялавё» от 13 апреля 2011 года в № 27 (7881) стр. 4, в 4 колонке, 11 абзаце допущена опечатка. Вместо «Комендантов Георгий Геннадьевич» следует читать «Комендантов Геннадий Герасимович».

Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-679-18-11. 4-5.

Продаю: гравмассу, щебень, песок, керамзит, бетон, торф, чернозем. С доставкой. Скидки. Тел.: 8-927-668-70-15. 6-13.

для пайщиков
СБЕРЕЖЕНИЯ
• новые выгодные условия (частичное снятие, пополнение сбережений)
• В ОКТЯБРЕ ПЕНСИОНЕРАМ - ПРАЗДНИЧНЫЕ % СТАВКИ И ПОДАРКИ
ЗАЙМЫ ЛЬГОТНЫЕ
• на покупку КРС - до 30 000 рублей
• на обучение - до 15 000 рублей
• на покупку и строительство жилья под материнский капитал
• срок пользования займом на покупку а\м увеличен до трех лет
КРЕДИТНЫЙ ПОТРЕБИТЕЛЬСКИЙ КООПЕРАТИВ “СОДРУЖЕСТВО”
Отделение № 3, с.Моргауши
ул.50 лет Октября, д.23, 2 этаж
www.kpksodrugestvo.ru
62-6-86
8 900 333 0001

Чăваш Республикин Сывлăха сыхлас ёç тата социаллă аталану министерствин Муркаш районён халăха социаллă хўтлёх паракан пайё тата социаллă пулăшу паракан центрё кунта ёçлекен тёп бухгалтерăн Н.Н. Васильевăн амăшё тата аслă специалистăн А.Г. Васильевăн кукамăшё

Люлия Егоровна
АНДРЕЕВА

вилсе кайнă пирки тарăннăн хурланни çинчен пёлтереççё.

Администрация Ильинского сельского поселения выражает глубокое соболезнование родным и близким Силантьевой Г.Н., главного специалиста-эксперта администрации Ильинского сельского поселения, по поводу кончины матери

АНДРЕЕВОЙ
Люлии Егоровны.

КИРПИЧ
более 500 видов и цветов
Газосиликатные блоки
ОПТОВЫЕ ЦЕНЫ
ТК “ТЕРМИНАЛ”
г.Чебоксары, Канашское шоссе,7/1, тел.30-55-15
г. Новочебоксарск , ул. Промышленная, 41, тел.73-84-12

Мăн Хураçкари «Тюльпан» ача сачён коллективё кунта воспитатель пулса ёçлекен Л.А. Симаковăн

АМĂШЁ

вилсе кайнă пирки унăн çемйипе тата çывăх тăванёсемпе пёрле тарăннăн хурланни çинчен пёлтерет.

Муркаш районёнчи «Çёнтерў ялавё» хаçат

УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ёçёсен, информаци политикин тата архив ёçён министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ёçёсен, информаци политикин тата архив ёçён министерствин «Муркаш районён «Çёнтерў ялавё» хаçат редакцийё» автономи учрежденийё.

Тёп редактор А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялё, Мир урамё, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тёп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35, пайсем: общество пурнăç пайё - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайё - 62-1-38.
Факс: 62-1-36. E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Çыхăну, информаци технологийёсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ёçлекен управленийё 2009 çулхи раштавăн 7-мёшёнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрацилене.

Калăпăшё 1,5 пичет листи.
Ал çырăвёсене рецензилемеççё, каялла тавăрса памаççё, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççё.
Рекламăпа пёлтерўсен чăнлăхёшён вёсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСЁ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйё Шапошников В.Л.
Пичете панă 07.10.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин., чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4357.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çёнтерў ялавё», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.